Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Яковлев Иван Яковлевич**

**Книга: Ача-пăча калавĕсем = Детские рассказы**

# Рассказ: Хĕсĕр ĕне

Пĕр арăмăн пит турăх çиесси килнĕ тет. Ĕни хĕсĕр тет кунăн, сĕт памасть тет. Кăшт та пулин çапах сĕт памĕ-ши тесе каять тет ку картана. Ĕни выртнă тет. Хăпăл-хапăл илет тет курка та чупать тет кӳршĕ арăмĕ патне.

– Аккам! Ĕне пăрулама выртнă, кĕвелĕк парса ярччĕ мана, – тесе ыйтать тет.

– А те пăрулама выртнă-халĕ вăл, те ахаль выртнă? тесе каларĕ тет лешĕ.

– Ăна-кăна пĕлмерĕм эппин эпĕ, – тесе каллех тухса кайрĕ тет хай арăм.

Туман тихан пилĕкне ан хуç теççĕ çав.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.